# Ухсай Яккӑвӗн чысне

## Ҫуралнӑранпа 80 ҫул ҫитнӗ тӗле

Нихҫан та шухӑ чӗрере
Ҫак юрату ҫухалмӗ ман.

Нихҫан та эп хӑватӑра
Манмастӑп, хамӑр юррӑмра
Ура тапса, пуҫа ухса,
Сире мухтатӑп эп, Ухсай (1929) —

вунсаккӑрти сӑвӑҫӑн ҫак йӗркисенче Ухсай поэзийӗн тӗп кӗвви янраса кайнӑ. Ҫав кӗвӗре тӑван ҫӗр сасси илтӗнет, чӗрӗ ҫутҫанталӑк сипечӗ сирпӗнсе тӑрасла вылять. Тӑван ҫутҫанталӑкпа пӗр кӗвӗллӗн ӗнерӗннӗ кӑмӑл ҫӗкленӗвӗ ҫамрӑк Ухсай сӑввисенче ҫине ҫинех палӑрать.

Ухсайӑн малтанхи сӑввисенчех лирикӑлла геройӑн тӗп енӗсем палӑраҫҫӗ. Вӑл — хура ҫӗр сӗткенӗпе ӳсе тӗрекленнӗ, хӑй вӑйне шанакан уҫӑ кӑмӑллӑ та ӗҫчен каччӑ. Тӗнче ҫине ҫав ҫын шанчӑклӑ куҫпа пӑхать, тавралӑхра, кулленхи пурнӑҫра ӗмӗрлӗх чӗрӗ илемсем курать. Лирикӑлла герой илӗртӳлӗхӗ — кӑмӑл туйӑм ултавсӑрлӑхӗнче.

Поэт нумай вӗреннӗ, сӑвӑ культурине ӳстерсе пынӑ, тӗнче литератури чи паха тӗслӗхсемпе паллашнӑ. Анчах ҫакӑ унӑн хӑйеверлӗхне пӗртте чакарман, ӑна уҫӑнрах, тасарах, курӑмлӑрах тунӑ ҫеҫ. Чан ентӗ, хӑш чух Ухсай хӑйӗн шалти вӑйне, сӑнарлӑхсен хӑватне ансат та яка йӗркесене вырнаҫтараймасть, ун пек чухне поэт ҫырнисем кӑткӑсрах та вӑрӑмрах пулса тухаҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӑл ҫырнисене васкамасар, пысӑк тимлехпе, пӗр хут ҫеҫ мар вуласа тухма тивет.

Ҫӗр, ҫутҫанталӑк ҫинчен ҫырнӑ савӑсенче Ухсайӑн «аллине» тӳрех туйса илетӗн. «Унӑн поэзийӗнче тӑван уйхирсен, ешӗл вӑрмансен, шӑнкӑр шӑнкӑр ҫӑлкуҫсен, тӑрӑ кӳлӗсен ҫепӗҫлӗхӗпе илемлехӗ, чӑваш халахӗн ӗҫченлӗхӗпе типтерлӗхӗ, кирек менле йывӑрлӑхра та халахӑн сӳнми ӗмӗчӗ, пулас ҫутӑ кунсен шанчӑкӗ палӑрать, чӑваш ҫӗршывӗпе унӑн ҫыннисен пурнӑҫӗ курӑнать», — тет Ухсай пултарулӑхне тепчекен Ип. Иванов литературовед.

«Атӑ кунчинчи тетрадь». Тӑван Ҫӗршывшӑн пынӑ Аслӑ вӑрҫӑра Я. Ухсай политработник, ҫар журналисчӗ пулнӑ. Вӑрҫӑ ҫулӗсемпе вӑл Атӑлтан пуҫласа Влтава шывӗ патне утса ҫитнӗ. Вӑрҫӑ хушшӑ ҫҫне — фронт пурнӑҫӗ ҫинчен ҫырассине — чунтан парanса тунӑ май, поэт сӑвасемпе поэмӑсем те хӑйламасӑр тӑман:

Асап сахал-и пирӗн ҫул ҫинче:
Кӗрхи йӗпе-сапа, кӑрлач сивви те...
Ҫӳретӗп эпӗ вӑрҫӑ хирӗнче
Тӑхланлӑ ҫумӑр витӗр, вилӗм витӗр...

Тар шӑршинче те тӗтӗмре, шывра
Ҫӳренӗ майӑн кӗнеке ҫыратап,
Ӑна хам ата кунчинче усратап.

Вӑрҫӑ темипе ҫырнӑ саввисене поэт каярах «Атӑ кунчинчи тетрадь» ярӑма пӗрлештернӗ.

«Винтовка» (1941) сӑвва ҫырнӑ чух Ухсай Яккӑвӗн асӗнче Лермонтовӑн «Кинжал» тата «Поэт» сӑввисен темисемпе кӗввисем тӑни куҫкӗрет. Уменхи поэтсен санарлӑхӗсем, шухӑшӗсем, кӗввисем кайранхи ҫыравҫӑсене хавхалантарнӑ тӗслӗхсем сахал мар. Вӑхӑчӗ вӑхӑчӗпе тахҫан ҫырнӑ япаласен пахалӑхӗ ҫивӗчрех курӑна пуҫлать, вӗсен кирлӗлӗхӗ ӳссе каять. Сӑмахран, Лермонтовӑн «Бородино» сӑввине иртнӗ Аслӑ вӑрҫӑра Мускава хӳтӗлекенсем хушшинче листовка пек салатнӑ. «Ребята! не Москва ль за нами? Умремте ж под Москвой, Как наши братья умирали!» — ҫак самахсем совет салтакесен хастарлӑхне ҫӗкленӗ, вӗсене татӑклӑ ҫапаҫава хаюллӑн кӗме чӗннӗ.

Я. Ухсай сӑввин пуҫламӑшне вулар-ха:

Хисеплӗ тусӑм, шанчӑклӑ пӑшалӑм
Ялтрать хӗвелӗн ҫутинче.

Сайралатса пичетленӗ сӑмахсем Лермонтов сӑввисен пуҫламӑшӗнче те тӗп шухӑша шӑнӑрлаҫҫӗ:

Люблю тебя, булатный мой кинжал,
Товарищ светлый и холодный.
(«Кинжал»)

Отделкой золотой блистает мой кинжал;
Клинок надежный, без порока.
(«Поэт»)

Икӗ автор та хӗҫпӑшал ҫинчен калана: Лермонтов геройӗн аллинче кинжал, Ухсайӑннинче — винтовка. Ик сӑвӑра та кӑрала «шанчӑклӑ тус» тенӗ, иккӗшенче те ҫапӑҫу хатӗрӗсем тасан ялтранине палӑртнӑ.

Пӗрпеклӗхсем нумай пулсан та, Ухсай шухӑшӗ хӑй йӗрӗпе аталанать. Лермонтов сӑввинчи кинжал халӗ мухтавсӑр та сарӑпсӑр тетте вырӑнне юлнӑ пулсан (авторе ку сӑнарпа гражданла тивӗҫе маннӑ поэтсене ытарлӑ сарлать), Ухсай саввинчи винтовка ҫӗршыва сыхлас ӗҫе малалла чыслӑн тӑсать:

Ӑна тытса тупа тӑватӑп эпӗ:
Нихҫан та тутӑхмӗ пӑшал.
Ҫухалмӗ ун мухтавепе хисепӗ,
Шалт перӗ те ӳкерӗ шалт.

«Винтовка» сӑвва «Кинжал» сӑва пуҫламӑшӗн виҫипе ҫырнӑ, анчах Ухсай пӗрремӗш йӗркене пӗр пусамсӑр сыпӑк — камӑллӑх аффиксӗ хушса хунӑ, ун вырӑнне иккӗмӗш йӗркинчи юлашки пусамсӑр сыпака пӑтӑрне. Иккӗмӗш йӗркене пусӑмла сыпӑкпа вӗҫлени сава интонацине хастарлӑхпа хӑюллах сӗмӗ хушать.

Тӑван чӗлхе ҫинчен ҫырнӑ «Чӑваш чӗлхи» (1945) сӑввинче Я. Ухсай халӑх чун хавале пирки калать. Тӑван сӑмах унпан халӑхӑн пур чӗре енесене пӗрлештересе тӑракан символ. Ку енене Ухсай Яккӑвӗ Ҫеҫпӗл традицине тытса пырать темелле.

Тӗтрелле Висла лӗш енчен ҫӳрен-и,
Кӗретеп-и Карпат ту чакалне,
Аҫта кайсассан та, илтетӗп эпӗ
Тӑван чӗлхемӗн тунсах сассине.

Вӑрҫӑ хирене утса тухна ентешсем тата автор хӑй те Чӑваш ҫӗрешен тунсахласа ҫитни палӑрать ку йӗркесенче. Хӑрушӑ тӑшмана ҫентернӗ халӑх чунӗ илемлӗ, вӑрҫӑ инкекӗ пуши унӑн ҫӗкленӳллӗхӗне ҫепӗҫлӗхне пӗтереймен. Чӑваш чӗлхинче, унӑн юрри-кеввинче ҫухатусем чӑтса ирттернӗ халӑхӑн йапанаве илтенет. Тин ҫеҫ ха пирӗн халӑх, ытти халӑхсемпе пӗрле, вырӑс ҫыннисемпе юнашар тӑрса, хӑйӗн таса хаярлахне тата паттӑрлӑхне кӑтартрӗ, темле йывӑрлӑхра та тӗреклӗхне чакармарӗ:

Ҫулла — тусан, хелле юр юнлӑ, тарӑн,
Ялсем те хуласем ҫинче хӗлхем.
Танкра та нӳрлӗ окопра тӑнларӑм
Тӗреклӗ сассуна, тӑван чӗлхем!

Поэтӑн чӑваш чӗлхи пирки каланӑ ырпиллӗ сӑмахӗсем хӑй халӑхӗн чуне ҫинчен каланнех:

Тӑшман тесен — ҫиллен, кӗрле кӗр тепӗр,
Туссем тесен — саркайӑкла ян-ян.
Хитре сассу та шухашу ӗрчетӗр.
Кеҫхи уйри йӗтем пек пул пуян!

«Ту урлӑ ҫул» (1935—52) роман чӑваш ялне колхоз йӗрки килсе улаштарнине кӑтартса парать. Ял ха-

## Пирӗн календарь



ăваш халăх поэчĕ Яков Гаврилович Ухсай çырнисем пирĕн литература аталанăвĕнче пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсенче чăваш кăмăл-туйăмĕ, шухăш ĕмĕчĕ сăнарланнă. Пурнăç тупсăмне, ырăпа усал уйрăм-уççине, илемлĕх тĕсĕ-кĕввине поэт халăх ăнкарăвĕпе шайланă, унăн куçĕпе курса, унăн хăлхипе илтсе ăшне хывнă. Ухсай Яккăвĕ çырнисене хура çĕр сĕткенĕ, халăх философийĕ, ĕççынни нисепĕ тата этеплĕхĕ, сăнарлă та витĕмлĕ чăваш чĕлхи чĕрĕ вăй кӳрсе тăраççĕ. Çавăнпа вĕсене республика тулашĕнче те кăмăлласа йышăнаççĕ. «Кĕлпук мучи», «Ту урлă çул», «Шурă хурăнпа калаçни» тата ытти хăшпĕр хайлавсене çĕршывăн пур кĕтесĕнче те пĕлеççĕ. Сăвăçăн пархатарлă ĕçне тивĕçлипе хакласа, ăна халăх поэчĕ ятне панă. Я. Ухсай — А. М. Горький тата К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен литература премийĕсене илме тивĕçлĕ пулнă, вăл темиçе орден кавалерĕ те.

Çухалми юрату. 1986 çулхи июлĕн 10-мĕшĕ. Пушкăрт çĕрĕнчи Слакпуç ялне халăх йышлăн пухăннă. Ку ял — «Нарспи» авторĕн, вилĕмсĕр К. В. Ивановăн, тăван ялĕ. Çак ялтах Ухсай Яккăвĕ те çуралнă. Паянхи кун ял çыннисемшĕн, Чăваш тата Пушкăрт республикисенчен килнĕ делегацисемшĕн йывăр та хурлă кун. Вĕсем кун-та чăваш халăх поэтне Я. Г. Ухсая юлашки çула ăсатаççĕ.

Кĕслету. Ку вырăна Ухсай Яккăвĕ яланах асра тытнă. Слакпуçне килмессерен çак çӳллĕ вырăна хăпарса тăван тавралăха пăхса савăннă, çакăнтах — кунçул тӳпинчен пăхнă пек — тăван халăх шăпи çинчен тарăн шухăшлă йĕркесем шăратнă. Я. Ухсай хăй виличчен хушса хăварнипе ăна шăпах çакăнта пытарнă. Унăн тăпри çинче мрамор хăма выртать, йĕри тавра — улăхçарансем, сăртсем, Слак шывĕ — пирĕн поэзин сиплĕ çăлкуçĕ — «шăнкăр-шăнкăр уçă янрать, чăваш чĕлхийĕ пек».

Юратрăм эп, хирсем, сире,
Сана та, сĕм-хура вăрман!

юнĕ ăна та каторгăна илсе çитерет.

Асамлă çĕре вайепе Кĕлпук патшана ларать. Тумĕ унăн пурçăнтан, тÿмисем мерчен, атă таканĕ ылтăнран; сĕтелĕ çинче пĕр арча укçа; килкартинче виçĕ мăшăр ут кÿлнĕ кÿме. Анчах патша пурнăçĕ килĕшмест Кĕлпука, хресченсем хирте суха тупа чух унăн та йышпа перле шăхăрса ĕçлесси килет. Кăмăл еккипе, патшана ларсанах, вăл хресченсене çĕр памалла тăвать, анчах малалла аптраса çитет: еçсерлех йăлахтарать ăна:

Ĕçлесе арăн-арăн
Тупнă çакар — ылтăн пек,
Уменчи кулачаран
Тутла та çемçе, сипек.

Патшара ларса мана
Йалахтарче — малалла
Эпĕ кÿйан вармана,
Парар пурта ман алла!

Ĕçлĕ пурнăçа хисеплеме хăнăхнă сывлăхлă çын патша пулма килĕшмест, тарçа-тересине те вăл еçе хăвалать. «Сасар çелек» калаври теп сапар — Кĕлпук танташе Уртемей. Ăна, Кĕлпукпа танлаштарсан, автор пĕтемпех юморпа ÿкерет. Уртемей пуçланă еçсем кулăшла, весем ăнаслă вĕсленеймеççĕ, çавăнпа пирен ăна хĕрхенес те килет. «Сухал» сыпăкра, акă, вăл урса кайна куштансем çине сиксе ÿкет, анчах ăна иккĕн-виççĕн тĕшерсе антараççĕ те «пачар теке пек çÿçне шелсер» тăпалтарма пуçлаççĕ. Кĕлпук çеç ăна çалса хăварать.

Хале ака Уртемей генерала тавармалли самант тупнă: мăшкăллашса, ăна ал парансн тăвать, тумне хывса иллсе хай çине генерал шалаварене пиншакне тăханса ярать, лешĕн Уртемей кивĕ тумне таханма тивет.

Хăраса ытла айванчăк
Ларакан улпутанне
Уртемей хывса туянчĕ
Сасар тирле çелекне.

Уртемей ăна витлерĕ,
Ирексер тыттарче ал:
— Саману сан иртнĕ, — терĕ, —
Халĕ эпе генерал.

Ку йĕркесене шÿт-пÿтшен мар, çук пурнăçри мĕскĕнлĕх çĕнĕ пурнăçра айванла мăнаçлăха саврăннинчен кулянса çырать автор. Чăваш ĕççынни этеплехĕнче ют пурлăхпа савăнасси йалара пулман, çакна эпир Кĕлпук патша кăмаленче те курнăччĕ. Уртемей савнăçĕ вăй хурса еçлесе тупнăскер мар. Çавăнпа Ухсай ку калаван вĕçенче халаха Уртемейрен тепре култарать: хуралта выртна чух ыйха путнă Уртемейĕн сăсар çĕлĕкне йытăсем хывса каяççĕ:

Кутăн-пуçан тăлпалаççĕ,
Çалкалаççĕ те çăмне,
Харкашаççĕ, чупкалаççĕ,
Пăрахаççĕ тыр ăшне.

Вара çĕлĕк ăшне путене йăва çавăрать. Анекдот майлă хайланă çак сыпăкра Ухсай кулăшĕн пĕр паллă енне куратпăр. Поэт нумай чухне кăмала каякан сăнарсен килĕшÿсĕр хăтланăвĕсене юморпа сивлет. Уртемей — поэтăн юратнă персонажĕ, çавăнпа ăна сатира мелĕсемпе сăнлани килĕшмест, унăн тÿнтерлĕхĕсене сÿнтерсе чакарма шанăх çăмăл кулăш выранлă.

Я. Ухсай елĕкхи йăласене, ĕненÿсене ÿкерме юратать, весем урла чăваш халăхĕн культури çутçанталăка, çĕре хисеплессипе çыхăннине кăтартать. Поэт танлаштарусемпе анлăн усă курать. Вĕсенчи сăнарлăхсем хресчен илеме мĕнле ăнланнине аван палăртаççĕ. Акă, Кĕлпук шыв ĕççе уçăлать те, унăн шăнăрĕсем тулли «хăват кĕркуние калча çинчи тихалла сиксе вылять»; валах шыва кенĕ чух авăр тепне чăмса керет те, ăтар пек, куçне уçса шыв айĕнчи чулсене курать; тĕттĕм каç аякри ял çутисем Кĕлпука сап-сарă сĕлĕ пĕрчи пек курăнса мăчлатаççĕ: юланутпа сиктерсе пынă май ун хăлхинче çил савар пек шăхăрать. Çăра тĕтрене Кĕлпук качака хăймипе танлаштарать; хĕллехи хире шăлакан юр ăна кĕнчеле арланине аса илтерет. Çĕр çынни куçĕпе курнă, унăн хăлхипе илтнĕ илемлĕхсем кусем.

Ухсайăн историлле темăпа çырнă произведенийĕсенчи чи палли — «Тутимĕр» трагеди (1940, 1965). Унта чăваш халахĕ ирекленĕхшĕн çĕкленсе Е. Пугачев ертсе пынă хресчен вăрçине хутшăннине ÿкерсе пана. Пушкартри чăвашсем патша тарçисем хесерленине чăтăймасăр пăлхав çеклеççĕ, анчах ăна вутпа та хеспе тискеррĕн пусараççĕ. Тутимĕр аппăшне Чемее Галахов воевода тытса асаплантарать, унан чĕлхине касса йытта парать. Вунçиччĕри маттур палхавçă Тутимĕр пушкăртсем хушшинче таркăнра кĕтÿ кĕтсе пурнать. Тепĕр икĕ çултан, Урал тăрахĕнче Пугачев пăлхавĕ пуçлансан, пушкăртсем те çĕкленеççĕ. Вĕсене Салават Юлаев ертсе пырать. Тăван ялне таврăннă Тутимĕр Салаватпа Пугачев ячĕпе чăвашсене те пусмăрçăсене хирĕç сапаçма чĕнет. Пăлхав мĕнле пыни çинчен каласа кăтартна та ентĕ трагедире.

Трагедири çынсем виçĕ ушкана пайланаççĕ. Пĕринче — халăха пусмăрласа тăракансем: тÿре-шара, выранти пуянсемпе куштансем, пăлхава путарма килнĕ офицерсемпе салтаксем. Иккемĕшенче — пусмарçăсене хирĕç кĕрешекенсем. Çак икĕ хире-хирĕç вăй хушшинче тепĕр ушкăн пăларса тăрать. Унта — Асамат, Курак, Ухливан. Вĕсем, хăйсен непĕсне нимрен мала хуракансем, пăлхав вахăтенче чыссăр ĕмĕчĕсене çитересшĕн çеç тăрăшаççĕ. Геройсене çапла ушкăнласа конфликтлă çыхăнусене кÿртни трагеди теп шухăшне уçса пама кирлĕ пулнă. Этем пурнăçĕн чăн пысак тупсăме — пĕтĕм вăя халăх телейĕшĕн панинче. Тутимерпе Эрпике вилеççĕ пулин те, вĕсен шапи куракансен шухăн-ĕмĕтне çеклет, çутă малашлăхшан кĕрешекенсен пархатарлă ĕçне чыслать. Обществăн ÿсемлĕ аталанăвне хирĕç тăракансем. аслă тĕллеве пĕлмесĕр хăйсен пайтишĕн çеç херенекенсен, теттĕм те тÿнтер туртăмсем айне пулна çынсен пурнăçĕ пуласлăхсăр. Çак шухăша Тутимĕр ташманĕсен



*Епхÿри Салават палăкĕ умĕнче*

лирикăлла поэма. Унта эпикăлла (калуллă; вырăсла: повествовательный) элементсем палăрсах каймаççĕ, вĕсен вырăнне сăвăç кăмăл-туйăмне сăнласси мала тухать. Ку поэмăра сюжетлăх мар (пĕр пĕринпе çыхăнса гăракан тĕрлĕ событисемпе сăнарсен системи), лирикăлла герой (е автор) шухăш-ĕмĕчĕ тĕп вырăнта. Хаилавра малтан пуçласа вĕçне çитиччене сăвăç кăмăл-туйăмĕ улшăнса пынине ӳкерне. Çĕршывра пулса иртнĕ событисене те аса илнĕ-ха унта, анчах çакна лирикăлла герой туйăмĕсене кăтартас тĕллевпе тунă. Произведени композицийĕнче сюжет паллисем вăйсăр, пĕтĕмĕшле илсен, вăл философилле, публицистикăлла, лирикăлла çаврасенчен тытăнса тăрать. Пирĕн çĕршыв пурнăçĕнчи инкеклĕ те чаплă тапхăра — вăрçă çулĕсене — историлле событисем урлă мар, лирикăлла герой кăмăлĕ пиçĕхсе пынине, çухатусем чăтса ирттернĕ этем пурнăç тупсăмне тарăнрах ăнланакан пулнине кăтартса сăнланă. Поэмăна каласу çеммипе хайлани автора хăйĕн шухăшне тарăнрах уçса пама пулăшать, чун ыратăвне те, чĕре шанчăкне те ĕненмелле палăртма май парать. Шурă хурăнпа калаçнă май вăл пĕтĕм халăхпа калаçать, çавăнпа сăвăçа канăç паман ыйтусем кашни вулавçăна хускатаççĕ. Поэма геройĕ пурнăç çинчен, хăйĕн тивĕçĕ çинчен каланисем пире те тарăн шухăша яраççĕ.

Çыравçă кăмăл-туйăмĕпе туртăмесем, поэма тĕп шухăшĕпе илемлĕх уйрăмлăхĕсем юнашар икĕ сăнар — Шурă хурăн тата лирикăлла герой — çыхăнăвĕнче тĕвĕленсе палăраççĕ. **Ш у р ă  х у р ă н** сăнарĕнче икĕ ен асăрхама пулать. Пĕрре ана автор тӳрĕ пĕлтерĕшпе, пурнăçра нумай усă паракан йывăç пек ӳкерет, тепре пурнăç чĕрĕлĕхне палăртакан символ пек кăтартать. Чăваш ĕçченĕн ăнланăвĕнче Усăпа Илем уйрăлми пĕрлешнĕ. Çакă Ухсай çырнисенче те сисĕнет. Эпир вулакан хайлавра та сăвăç хурăна пайтине кура мухтаса илет:

Тав тикĕтпе пурак панишĕн,
Тав сухăршăн тата тепре,
Тав ешĕл милĕк кастарнишĕн,
Пурне те, хурăнсем, сире!

Анчах çакна илеме туйман, тупăша кăна хаклама пĕлекенсескер çырнă теме çук. Маларахри йĕркесенче хресчен пурнăçне илемлетсе кăтартнă хыççăн çеç каланă поэт кӳ сăмахсене. Хурăнăн тикĕчĕ те «хăйма пек», хуппинчен тунă пуракпа чăваш çамракĕсем çырлана çӳреççĕ, хурăн сухăрне улахсенче хăйсен хĕрĕсене парнеленĕ (Хĕл сизвинче тартаннă, хĕрлĕ пит çăмартиллĕ хĕрсене Вăрман шăршиллĕ сухăр кирлĕ Çинçе çип пĕтернĕ чухне). Тулăх та тăнăç пурнăç çынни илеме маларах та хунă пулĕ:

Туя валли çап-çамрăк хурăн
Яка пулсассăн та, хресчен
Ăна касмасăр: «Шăллăм, пурăн!» —
Тесе çеç иртнĕ умĕнчен.

Лирикăлла поэзире хурăн сăнарепе савни тасалăхне тата илемне ытарлă палăртаççĕ. Ун пек тĕслĕхсем Ухсай çырнисенче те пур. Ку поэмăра сăвăç сав сăнара ăнлăлатать, йышлă хурăн сăнарĕпе вăл вăрçăчченхи яш кĕрĕме палăртать, вăрçăра пуç хунă ăру вулавçăсен умне касса тăкнă хурăн вăрманĕ пек тухса тăрать:

Сан шăллусем кунта ларатчĕç,
Йăмăкусем те ху тавра
Хĕрсем вăйăи пекех тăратчĕç
Çурхи хевеллĕ вăхăтра.
Кăвак тӳпенелле хăюллă
Пăхатчĕç çӳллĕ те кăтра.
Тункатисем çеç тăрса юлнă —
Хунавсăр, çерек, хуп хура.

Шурă хурăн сăнарепе юнашар **л и р и к ă л л а  г е р о и  с ă н а р ĕ** аталанса пырать. Нумай çул иртсен, сăвăç хăй çуралса ӳснĕ ялне çавăнса çитет. Тунсăхлана чунепе вăл ашшĕ-амăш çĕршывне туртăнать, кунта уншăн кашни вырăн хакла, кунти тавралăх ăна тăван чун пекех çывăх:

Мана курас тесе кĕтеççĕ
Пур йывăç та, пур курăк та,
Çилсем те чăвашла пуплеççĕ,
Мана палласçĕ пек кунта.

Ача чухне чупнă сукмаксемпе пырса, сăвăç пĕччен ларакан вату хурăн патне тухать. Сăпайлăх йĕркипе, лирикăлла герой чи малтан Хурăна сывлăх сунать, ун умĕнчи айăпне (пуртăпа амантса шывне пухнăшăн) каçарттарать, йывăçран ун пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлет. Халăх юлнă хурăн тавра ĕлĕк вăрман кашласа ларнине аса илнĕ май, поэт умне вăрçăра выртса юлнă тантăшĕсем тухса тăраççĕ. Сăвăç хăйĕн кулленхи пурнăçне вĕсен ячĕпе тĕрĕслесе тăни çинчен калать. Аслă вăрçă вучĕ витĕр утса тухнă çын нумай хура-шур курнă ĕнтĕ, анчах вăл ун çинчен вакласа лармасть, ăна вăрçăран таврăнайман тус-тантăшĕсен шăпи кулянтарать. Пирĕн аслă çĕнтерӳ пысăк терт те шутсăр нумай çухату витĕр килнине астутаракан чĕрĕ палăк пек ларакан Хурăн умĕнче поэт хăй тăван çĕршывĕпе нихăçан уйрăлми çыхăннине туять.

Ухсай сăвви поэминче чăваш халăх историйĕнчи тĕрлĕ тапхăрсене сăнланă, пурнăç улшăннă май нацилле психологи, эстетика тата этеплĕх ăнкарăвĕсем аталанса, çĕнелсе пынине кăтартнă. Ухсай геройĕ — çĕр çынни, çĕр ĕçченĕ. Унăн шухăш-кăмăлĕнче, ĕмĕт-туртăнăвĕнче халăхăн ĕмĕртен вăй илсе пынă паха енĕсем палăраççĕ. Вăл сăпайлă та ĕçчен, ырă кăмăллă та пиçĕ çын. Ухсай юратнă çынсем хăйсене çутçанталăк пайĕ пек вăйлă та чĕрĕ туяççĕ, вĕсен ӳтĕнче çăра та сывă юн чупать, вĕсем тĕнчене çуса тасатнă пек усă та нумай тĕслĕ кураççĕ. Поэта «экзотикăшăн» çырать, тĕшмĕшлĕ йăла-йĕркеçене юратса сăнлать тесе пĕрре кăна мар каласкаласа илнĕ. Анчах пирĕн вулакансем те, урăх халăх çыннисем те (сав шутра критиксем) сăвăç сăнарлăхĕнче чăн-чăн искусство ахахĕсем тупаççĕ, халăх ĕненĕвĕсем, йăлисем, хăнăхăвĕсем урлă чăваш çынни хал туйăмне ăнкарма тăрăшаççĕ.

Чăваш поэзийĕнче икĕ йĕр пур, теççĕ: Хусанкай ячепе тĕнче литератури пуянлăхне (çырас ăсталăха, темăсене, этеплĕх принципĕсене) алла илсе «хамăрăн» туса пынине çыхăнтараççĕ; Ухсай çырнисенче аваллăхран чĕрхаллĕн сыхланса çитнĕ «пăсăлман» туртăмсене асăрхаççĕ. Ку сăнавра тĕрĕслĕх пурах, çапах Ухсай геройĕсене социалла типсем те темелле. Чăваш халăх характерне палăртакан колоритлă сăнарсем (Кĕлпук, Каллья, Уртемей т. ыт. те) — хăй вăхăтĕнчи çынсем, вĕсене пĕр саманаран теприне ирĕклĕн куçарса лартма çук.

Ухсай фольклорпа анлăн усă курать. Халăх сăмахлăхĕ ăна чĕлхе пуянлăхне ӳстерме пулăшать, витĕмлĕ те курăмлă сăнарсем тупма вĕрентет, сюжет йĕркелеме материал парать.

Хăйĕн пултарулăхне Я. Г. Ухсай тăван халăха халалланă. Çавăнпа унăн ячĕ чăваш литературинче нихçан та сӳнес çук.

**Виталий ЧЕКУШКИН**